Çемье ыйтăвĕсемпе

Çирĕп çемье – тăнăç общество

Чăннипех те хальхи вăхăтра çемьен пĕлтерĕшĕпе обществăри вырăнĕ çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ темелле. Çитĕнекен ăру пуласлăхĕпе малашлăхĕ, ачасем тивĕçлĕ воспитани илсе ўссе пурнăçра хăйсен вырăнне тупасси, çĕршыва юрăхлă çынсем пуласси çемьери йĕркелĕхпе, ашшĕ-амăшĕ хушшинчи хутшăнусемпе тачă çыхăннă. Çемье пĕлтерĕшне юлашки çулсенче патшалăх шайне кăларни ăнсăртран мар.

Çавна май район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхĕпе Маргарита Петровна РУБЦОВАПА тĕл пулса çемьепе çыхăннă ыйтусем çине хурав илес терĕм.

– Маргарита Петровна, чи малтанах районти çак вăхăтри демографиллĕ лару-тăрупа паллаштаймăрши? Кăçалхи кăтартусене иртнĕ çулхи çав вăхăтрисемпе танлаштарса пăхсан, мĕн палăртма пулать?

– Малтанах çемье чăмăртаксен шучĕ ўснине палăртнă пулăттăм. Кăçалхи январь–октябрь уйăхĕсенче çĕнĕрен 180 çемье чăмăртанчĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен ку вăл 14 çемье нумайрах. Ку япăх мар тейĕпĕр. Çав вăхăтрах вара мăшăрсем уйрăлакан çемьесен шучĕ те ўсни палăрать. Иртнĕ çул çак вăхăта 64 çемье арканчĕ пулсан, кăçал кун пеккисем 68 пулчĕç.

Çемьесем арканни вăл пĕр ыйту. Анчах та кашни çемье вăл – çын шăпи. Çитменнине çемьесенче ытларах чухне çул çитмен ачасем е ашшĕсĕр, е амăшĕсĕр тăрса юлаççĕ. Кун пек чухне вĕсем çителĕклĕ те тулли воспитани илме пултарасси шухăшсем çуратать.

Иртнĕ 10 уйăхра пĕлтĕрхинчен 19 ача сахалрах е пĕтĕмпе 326 ача çуралчĕ. Вилекенсен шучĕ пĕтĕмĕшле çав шайрах юлчĕ темелле: иртнĕ çул 517 çын çĕре кĕнĕ пулсан, кăçал – 518 çын.

– Халĕ ĕлĕкхи пек ватă çынсем, ашшĕ-амăшĕ хушнипе, пăхса хунипе мар, хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешеççĕçке çамрăксем. Туйсем кĕрленĕ чухне çĕнĕ çынсенчен телейлĕреххи никам та çук тейĕн. Мĕнле хура кушак татать-ха кайран мăшăрсен пĕрлехи çулне?

– Çĕршыв правительстви демографи политикин ыйтăвĕсене татса парассипе вĕçĕм ĕçлет. Кусем вĕсем çамрăк çемьесене хваттер туянма уйăрса паракан кредитсем те, çемье пособийĕсен системин реформи те, иккĕмĕш е хыççăн çуралнă ачасемшĕн паракан ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕ те.

Çакăн пек тимлĕх уйăрнине пăхмасăрах хăш чухне ачасен тулли мар çемьесенче воспитани илсе ўсме тивет. Çемьесем арканнин сăлтавĕсене тишкерсе пăхни çавна çирĕплетсех калама май парать: 4 пайĕнчен 3 пайĕнче çамрăксем хăйсем çемье пурнăçĕпе пурăнма нравственность тата психологи тĕлĕшĕнчен хатĕр мар. Тепĕр майлă каласан, ашшĕ-амăшĕсем чи малтанах хăйсем çинчен шухăшлаççĕ, ачисем çинчен вара манса каяççĕ.

10 уйăх итогĕсем çапла. Арканса кайнă 68 çемьерен 42 çемйинче çул çитмен 53 ача е ашшĕн, е амăшĕн хўтлĕхĕсĕр юлчĕ. Вĕсене вара ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕ куллен тата вĕçĕм кирлĕ.

Ыйтса тĕпченĕ чухне уйрăлнине ытларахăшĕ хăйсен çемье пурнăçĕ ăнманнипе ăнлантарать. Анчах та çамрăксем, уйрăмах çемье пуçĕсем хушшинче хăйсен пурнăçне шыв юххипе янисем сахал мар. Вĕсем малашлăхпа мар, паянхи кунпа пурăнма хăнăхнă. Тĕрĕссипе хăйсемшĕн те пурăнмаççĕ, пурнăçне çулăмсăрах çунтарса яраççĕ кăна, малашлăх пирки те, хăйсене çывăх çыннисем пирки те аса илмеççĕ.

Хăшĕсемшĕн хаяр шĕвек çемйипе ачисемшĕн хаклăрах. Кун пеккисемшĕн «юрату», «çемье», «ачасем», «ответлăх» ăнланусем çук ĕнтĕ. Çакăн çине социаллă факторсем те витĕм кўмеççĕ мар. Кусем вĕсем ĕçсĕрлĕх, çирĕп ĕç укçи пулманни. Чылайăшĕ кун пек чухне çăлăнăça эрех черккинче шырать. Çакă вăл тĕпсĕр авăр пулнине кун пеккисен хăвăртрах ăнланса илсе тĕрĕс пĕтĕмлетўсем тăвасчĕ.

– Официаллă майпа саккунпа çамрăксем 18 çул тултарсан вĕсене пĕрлешме ирĕк параççĕ. Енчен те вĕсем çав вăхăтченех çемье çавăрасшăн пулсан е арăм пулассин çие юлнă пулсан? Пур-и кун пек тĕслĕхсем районта?

– РФ Çемье кодексĕн 13-мĕш статйипе килĕшўллĕн Раççей Федерацийĕнче яшпа хĕр 18 çул тултарнă пулсан, вĕсене пĕрлешме ирĕк параççĕ. Анчах та шута илме кирлĕ сăлтавсене те пăхса хунă. Ача çие юлнă, ача çуралнă е пĕрлешес текенсенчен пĕрин сывлăхĕшĕн е пурнăçĕшĕн хăрушлăх пур пулсан т. ыт. те – 16 çул тултарнисене пĕрлешме ирĕк пама пултараççĕ. Анчах та 16 çул тултарманнисен кун пек ирĕк пулаймасть.

18 çул тултармасăрах пĕрлешес текенсен регистрацие тăнă вырăнти самоуправлени органне заявлени çырса парас пулать. Пирĕн район администрацийĕнче ку функцие – çемье çавăракансен ўсĕм шайне чакарассипе район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕн проектне хатĕрлессине – район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн опекăпа попечительство органĕ çине хунă.

Кун пек ирĕк илнĕ хыççăн çамрăксем ытти чухнехи пекех ЗАГС пайне пырса заявлени параççĕ, кунтах вĕсем мăшăрланнине регистрацилеççĕ. Ку енĕпе ЗАГС пайĕн статистики çапла: кăçал 18 çула çитмен 2 хĕр кавча тухнă. Яшсем хушшинче кун пеккисем пулман. Пĕрремĕш сăлтав кунта – çие юлни. Çавна май вĕсем хăвăртрах çемье хутшăнăвĕсене регистрацилеме тăрăшаççĕ.

– Çынсем вилессин шайĕ чакманни пăшăрхантарать. Сăлтавĕсене мĕнре куратăр?

– Анализ кăтартăвĕсем çапларах. Кăçалхи 10 уйăхра арçынсем 258, хĕрарăмсем 260 вилнĕ. Вăл шутра 1 çулталăка çитмен 1 ача. Арçынсем вăтамран 61 çулта, хĕрарăмсем 75 çулта çĕре кĕнĕ. Хăйсен вилĕмĕпе вилменнисем 146 пулнă. Вăл шутран суицид тĕслĕхĕсем 30, наркăмăшланса вилнисем 5, 12 çын шăнса вилнĕ, сурансене пула 20 çыннăн, çулсем çинчи аварисенче 6 çыннăн пурнăçĕ татăлнă, 4 çын шывра путса вилнĕ. 69 çын мĕншĕн вилни вара лаборатори тĕпчевĕсем ирттернĕ хыççăн паллă пулĕ. Ку вăл çак çынсем палăртман сăлтавсене пула пурнăçран уйрăлса кайни пирки калать. Ытти 259 çын чирлесе вилнĕ, 113 çын – ватлăха пула.

– Çемьере йыш хушăнни – яланах телей. Хăйсен пепкисене мĕнле ятсем пама кăмăлласçĕ паянхи çамрăк мăшăрсем?

– Çемьере çуралакан ача яланах пĕр-пĕрин хушшинчи юрату кăшăлĕ пулса тăнă. Çак тапхăрта ЗАГС пайĕнче 326 ачана регистрацилерĕмĕр терĕм ĕнтĕ. Вăл шутран 153 хĕр ача тата 173 арçын ача.

Чи анлă сарăлнă ятсем арçын ачасен Максим (15), Кирилл (11), Никита (10), хĕр ачасен Анастасия (15), Дарья (14), Виктория (11).

Сайра тĕл пулакан ятсем хушшинче Айрат, Радомир, Доминик, Савелий, Виталина, Зулайхо, Доминика, Серафима, Фекла.

– Маргарита Петровна, мĕн сĕннĕ пулăттăр Эсир çемье çавăрас текен çамрăксене?

– Аслă юрату туйăмĕ икĕ чĕрене яланах туй патне илсе çитерет. Туй вара вăл авалтанпах кирек камшăн та чи асра юлмалли те чи лайăх уявсенчен пĕри шутланнă. Уйрăмах пĕр-пĕрне юратакансемшĕн.

Çамрăксене вара çавна каласа хăварасшăн. Хăвăрăн çемье телейне эсир хăвăрах çул уçса паратăр. Эпир вара çавна кăна хушса калама пултаратпăр: пĕр-пĕрне юратса та килĕштерсе пурăнăр, сирĕн мăшăрлану ĕмĕрлĕхе пултăр, çемье пурнăçĕнче килĕшў хуçалантăр.

В. ШАПОШНИКОВ каласнă.

Ыр кăмăллăх иксĕлмест

Ăшă кăмăлшăн, тимлĕхшĕн тавах

Эпир, районти ветерансем, хăй вăхăтĕнче пурте хамăр ĕç вырăнĕнче район аталанăвĕшĕн чуна парса ĕçленĕ. Паян та эпир пурнăçпа танах утма тăрăшатпăр. Пире акă мĕн савăнтарать: район администрацийĕ тивĕçлĕ канăва тухнă çынсене манса каймасть, пысăк тимлĕх уйăрать. Кăçал районти ветерансен хорне йĕркелесе ятăмăр. Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов пирĕн шухăша ырларĕ. Ку çеç те мар, район администрацийĕ пулăшнипе эпир сцена çине тухмалли костюмсем çĕлеттертĕмĕр. Тавах Юрий Александровича пире ăнланнăшăн, пулăшнăшăн.

Эпир, тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те, районти лару-тăрупа кăсăклансах тăратпăр. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе çывăхрах паллашма тăрăшатпăр. Нумаях пулмасть акă эпир Муркашри чăх-чĕп фабрикинче пулса куртăмăр. Унăн ертўçи Н.Г. Ванеркин пире çав тери ăшшăн кĕтсе илчĕ. Коллектив ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ: хăй экскурсовод вырăнне пулса, кашни цеха илсе кайса кăтартрĕ. Чи çывăх хăнасене кĕтсе илнĕ пек кĕтсе илчĕ. Ку çеç те мар, Шупашкарти артистсене чĕнсе илчĕ, илемлĕ концерт кăтартрĕ пире. Тем пысăкăш тав Николай Григорьевича ватăсене сума сунăшăн.

Районти ытти ертўçĕсем те аслă ăру çыннисене хисеплени пирĕн кăмăла ăшăтать. Шухăшларăмăр та – тепрехинче ветерансемпе Шупашкара концерт курма кайма шутларăмăр. Муркаш райпо канашĕн ертўçи Б.В. Андреев, Иван Никитин предприниматель пире кайса килме спонсор пулăшăвне пачĕç.

Е тата çулла «Ударник» хуçалăхра ветерансен хорĕпе пулни аса килет. Хуçалăх ертўçи П.П. Давыдов та, унти ĕçченсем те пире хапăл туса кĕтсе илчĕç. Тавах вĕсене пурне те.

Чăннипех те тимлĕхрен, ăшă сăмахран хаклăраххи мĕн пултăр. Вăл вара района ертсе пыракансен те, районти предприятисен тилхепине тытса пыракансен те çителĕклех. Çакă хавхалантарать пире, малалла пурăнма, район аталанăвне хамăр тўпене хывма вăй-хал парать.

М. ВИНОГРАДОВА, районти ветерансен канашĕн ертўçи; Е. КУЛИКОВА, Муркашри пенсионерсен клубĕн ертўçи; П. ИСАЕВ, ĕç ветеранĕ.

Аслă Çĕнтерў тунăранпа 65 çул çитнĕ май

Ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕ

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче 1941–1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерў тунăранпа 65 çул çитнине хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен йĕркелў комитечĕн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ.

Малтанах Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи социаллă хўтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова сăмах илчĕ. Вăл палăртнă тăрăх, районта çак вăхăта вăрçă участникĕсем 121 çын тата вăрçăра вилнĕ салтак арăмĕсем 22-ĕн. Çулленхи пекех вĕсем валли республика бюджетĕнчен Çĕнтерў кунĕ тĕлне парнесем уйăраççĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене укçан пулăшма та пăхса хунă. Кунпа пĕрлех коммуналлă çăмăллăхсемпе усă курнăшăн тўлеме укçа илсе тăракансем те çук мар.

2005 çулччен черете тăнисене пурне те автотранспортпа тивĕçтернĕ. Автомашинăсем илнисем хальхи вăхăтра Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсем 18 çын.

Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кăçал 3 çын сертификат илнĕ. Вĕсен пурнăç условийĕсене январь-март уйăхĕсенче кашнин патне специалистсем килĕрен çўренĕ чухне те тĕпчесе пĕлме палăртнă. Кунпа пĕрлех специалистсем ветерансен сывлăхĕпе те интересленĕç.

Тыл ĕçченĕсем 1947 çын шутланаççĕ. Анчах та 1928–1931 çулсенче çуралнисем хушшинче Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕн удостоверенине илменнисем те пур-ха. Пĕрисен вăрçă çулĕсенче ĕçлени пирки документсем çук, теприсем хăйсем ĕçлени пирки свидетельство кăтартăвĕсене тăратаймаççĕ.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Е.М. Александрова вăрçă участникĕсемпе тыл ĕçченĕсен шучĕ тĕлĕшпе Пенси фончĕпе социаллă хўтлĕх пайĕн даннăйĕсем пĕр килменнине палăртрĕ. Ăна йĕркелесе пĕр шая çитерес пулать.

Ветерансем валли адреслă пулăшу та уйăрма пăхнă.

Районти тĕп больницăн поликлиника заведующийĕ А.П. Чиновникова вăрçă ветеранĕсемпе инваличĕсене медицина пулăшăвĕ парассине лайăхлатса пырассин ыйтăвĕсене хускатрĕ. Вĕсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Кирек епле ыйту та хуравсăр юлмасть. Вырăнсенчи медицина ĕçченĕсем вăрçă ветеранĕсем патне килĕрен тухса çўрессине йĕркеленĕ. Участоксенчи тухтăрсем чирлисене амбулатори медицина пулăшăвĕ памалли мелсене палăртаççĕ.

Аслă Çĕнтерў юбилейне халаллана мероприятисем туса ирттерессине шкулсенче пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Вĕсем пирки район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова хыпарларĕ.

Аслă Çĕнтерў тунăранпа 65 çул çитнине халалласа районта ирттерекен халăх пултарулăхĕн фестивалĕ пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева, районти «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат страницисенче тата район администрацийĕн сайчĕ çинче Аслă Çĕнтерў уявне халалласа информацип пропаганда ĕçне йĕркелесси пирки район хаçачĕн ответлă секретарĕ В.Л. Шапошников тата район администрацийĕн информацип тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ В.Г. Лаврентьев каласа пачĕç, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева тата Ярапайкасси ял тăрăхĕн специалисчĕ А.В. Чернова хăйсен ял тăрăхĕсен территорийĕсенче Аслă Çĕнтерў уявне хатĕрленсе кĕтсе илес ĕçсем епле пынипе паллаштарчĕç.

В. ШАПОШНИКОВ.

Истори страницисем

Юратнă шкул: ĕнер, паян, ыран

5. 1930-1990 çулсем

1930 çулхи сентябрь уйăхĕнче хресчен çамрăкĕсен шкулне туса хураççĕ. Халăх хушшинче хутла пĕлменнине пăрахăçлас тесе вĕренекен кашни çамрăкăн хутла пĕлмен пĕр е икĕ çынна «çутта кăлармалла» пулнă. Ĕç воспитанийĕ çине питĕ пысăк тимлĕх уйăрнă. 1931 çулта вĕренўре аван ĕлкĕрсе пынăшăн 12 ачана Мускава экскурсие илсе кайни паллă.

1932 çулта шкул вăйĕпе 3 ĕне,5 сысна, 2 лаша тата 10 кролик ўсранă. Вĕсене валли апат хатĕрлессипе те тимленĕ. 1932 çулта вара шкула тĕслĕх шкулĕн ятне параççĕ. Вăл вăхăтра шкул директорĕ А.А. Шишкин пулнă.

1934 çулхи май уйăхĕнче Муркашри шкула вăтам шкул туса хураççĕ. Директор пулса А.В. Афанасьева ĕçлеме тытăнать. Кунта Орининти, Москакассинчи, Чуманкассинчи, Якаткассинчи, Турайри тата Нискассинчи тулли мар вăтам шкулсенчен килнисем те вĕреннĕ.

1937 çулта шкулта ĕçлекен темиçе учителе репрессиленĕ. Çапла вара вăхăтлăх физика, алгебра, геометри, нимĕç чĕлхи тата истори предмечĕсене вĕрентме пăрахнă. Ачасем инçетрен çўренĕ, анчах та вĕсем урока юлса çитсен, айăплав çирĕп пулнă.

Шкул завучĕ Григорий Романович Романов çамрăксенчен шкулта вĕренме ыйтса çырнă хутсене йышăнать. 1930 çул.

Вăрçă çулĕсенче Муркашри вăтам шкулта ĕçлекен учительсем фронта тухса каяççĕ. Ачасем вара çак тапхăрта Хĕрлĕ Çар салтакĕсене пулăшассишĕн нумай тăрăшнă, алсиш-чăлха çыхса панă, тĕрлĕ ĕçе пурнăçланипе пухăннă укçана та çара ăсатнă.

Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнă яшсем çапăçу хирĕсенче паттăрлăхпа палăрнă. А.И. Воробьев Совет Союзĕн Геройĕ пулма тивĕçнĕ. Вăрçă хыççăн вара вăл колхоз председателĕнче ĕçленĕ. И.Г. Мешаков та Совет Союзĕн Геройĕ пулнă. Шкултан вăрçа кайнă 20 учитель те тĕрлĕ орденсемпе медальсене тивĕçнĕ.

1958 çулта шкул Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан ĕç политехника шкулĕн статусне илет. Кунта производство вĕрентĕвĕ те пулса пырать. Шкулта вĕренекенсем выльăх пăхакан, тракторист-машинист, слесарь-автомеханик профессийĕсене алла илнĕ. 1964 çулта шкулта пурĕ 640 ачана 37 учитель вĕрентнĕ.

1966 çулхи çулла вĕренекенсен ушкăнĕ мотоциклсемпе Мускава çити турпохода кайса килме те пултарнă. Ачасене В.Ф. Федоров ертсе пынă.

1970-мĕш çулсен пуçламăшĕсем шкулта кашни предмета вĕрентме уйрăм кабинетсем тунипе шкул историне кĕрсе юлнă. Иккĕмĕш мотопоход та çак çулсенче пулнă.

1982 çулта вара Муркаш шкулĕ çĕршывăн Çут ĕç министерствин куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне тивĕçнĕ. Шкулта вĕренекенсем техника ĕçне тата дояркăсен ĕçне вĕреннĕ. 1979–1983 çулсенче шкул директорĕ пулса А.Е. Виноградов, 1983–1990 çулсенче В.В. Ялушкин ĕçленĕ.

1987 çулта 1176 ача вĕреннелĕх çĕнĕ шкул çуртне тума тытăнаççĕ. Тепĕр çулхине вара ăна савăнăçлă лару-тăрура уçаççĕ. Районта пĕрремĕш информатика кабинетĕсенчен пĕри шăпах Муркаш шкулĕнче ĕçлеме пуçлать.

1990–1996 çулсенче шкула Г.Ф. Волков ертсе пынă, тепĕр вĕренў çулне – В.Н. Николаев.

Олимпиада ФЕДОРОВА, Александра ЕГОРОВА.
Муркаш шкулĕ.